# Чăваш гидронимĕсен лексикăпа семантика ушкăнĕсем

**DOI** 10.31483/r-98039
**УДК** 800

**А.С. Егорова**
Чăваш Енĕн Вĕренӳ министерствин ЧР ХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ
Шупашкар, Раççей Федерацийĕ
ORCID: https://orcid.org/0000-0002-3603-171X, e-mail: annaerenar@mail.ru

***Аннотаци:*** Статьяра чăваш чĕлхинче шыв-шура ят панин уйрăмлăхĕсене тишкернĕ, чăваш гидронимĕсен пĕлтерĕш ушкăнĕсене палăртнă. Шыв-шур ячĕсенче лингвистика, географи, этнографи тата истори информацийĕ пуян пулнăран тата вăхăт иртнĕçемĕн гидронимсем çухалма е улшăнма пултарнăран суйлсас илнĕ тема актуаллă.
*Тĕпчев тĕллевĕ* – чăваш гидронимĕсен пĕлтерĕш ушкăнĕсене тупса палăртассси, шыв-шура ят панин уйрăмлăхĕсене тĕпчесси. Статьяра юхан шывсемпе шывлă çырмасен, пĕвесемпе кӳлĕсен, шурлăхсемпе шурлă вырăнсен, çăл куçсемпе çăлсен ячĕсене тишкернĕ. Автор хăй пухнă материалпа ытларах усă курнă, çавăн пекех Чăваш патшалăх гу-манитари ăслăлăхĕсен институчĕн Наука архивĕнче упранакан топонимсен картотекипе тата картографи çăл куçĕсемпе, ял администрацийĕсенче упра-накан картăсене тишкернĕ.
Тĕпчеве ытларах сăнлав, танлаштару-шайлаштару, типологи, статистика *мелĕсем* çине таянса йĕркеленĕ.
*Тĕпчев ĕçĕ туса* ирттернĕ хыççăн автор чăваш гидронимĕсене икĕ пысăк ушкăна – çут çанталăк уйрăмлăхĕсене кăтартаканнисем тата çынпа е унăн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннисем çине – уйăрать. Çут çанталăк уйрăмлăхĕсене кăтартакан-нисем хăйсем вак ушкăнсене пайланаççĕ: 1) объект уйрăмлăхне кăтартакан-нисем; 2) çĕр пичĕн расналăхне кăтартаканнисем; 3) ӳсен-тăран тĕнчин хăй евĕрлĕхне палăртаканнисем; 4) чĕр чун тĕнчин хăй евĕрлĕхне палăртаканни-сем; 5) географи объекчĕсен вырăнне кăтартаканнисем; 6) объект шутне кăтартаканнисем; 7) сăнарлă гидронимсем. Çынпа е унăн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннисене автор çак ушкăнсене уйăрать: 1) халăхăн пурлăх культурипе çыхăннисем; 2) ăс-хакăл культурипе çыхăннисем; 3) çын ячĕсенчен пулнисем; 4) халăх ячĕсенчен пулнисем; 5) топонимсенчен пулнисем.
*Юлашкинчен* автор гидронимсене лексикăпа семантика енчен тишкерни шыв-шура ят парас принципсене, вырăнти çут çанталăк географи уйрăмлăхĕсене палăртма, халăх историйĕпе йăли-йĕркине пĕлме пулăшни çинчен пĕтĕмлетӳ тăвать.

***Тĕп сăмахсем:*** чăваш гидронимĕсем, чăваш ойконимĕсем, шыв-шур ячĕсем, лексикăпа семантика тишкерĕвĕ, лексикăпа семантика ушкăнĕсем, çут çанталăк уйрăмлăхĕсем, чăваш халăхĕн пурлăх тата ăс-тăн культури.

***Цитатăлама:*** Егорова А.С. Чăваш гидронимĕсен лексикăпа семантика ушкăнĕсем // Вĕренӳ аталанăвĕ. – 2021. – Т. 4, №1. – С. 29-34. DOI:10.31483/r-98039.

# Лексико-семантические группы чувашских гидронимов

**А.С. Егорова**
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Министерства образования и молодежной политики Чувашской Республики,
Чебоксары,Российская Федерация.
ORCID: https://orcid.org/0000-0002-3603-171X, e-mail: annaerenar@mail.ru

***Резюме:*** Статья посвящена лексико-семантическому анализу чувашских гидронимов.
*Цель исследования* – классификация названия водных объектов по лексико-семантическим группам, выявление основных принципов номинации гидронимов. В статье рассматриваются наименования рек и ручьев, озер и прудов, болот и болотистых мест, названия родников и колодцев. Основной материал для анализа собран автором во время полевых исследований, были использованы данные картотеки топонимов Научного архива ЧГИГН и различных картографических источников, карты земельных угодий, хранящихся в сельских администрациях Чувашской Республики.
*Основные методы*: описательный, сравнительно-сопоставительный, типологический, статистический.
*Результаты исследования* показали, что по лексико-семантической классификации чувашские гидронимы подразделяются на две группы: 1) гидронимы, отражающие физико-географические свойства водных объектов и окружающей их среды; 2) гидронимы, возникшие в результате практической деятельности человека. Большая часть названий водных объектов основана на специфическом признаке самих географических реалий. Их чувашском языке можно сгруппировать в следующие подгруппы: 1) названия, содержащие существенный признак объекта; 2) названия, обозначающие почву, грунт; 3) названия, связанные с растительным миром; 4) названия, связанные с животным миром; 5) названия, указывающие на местоположение водного объекта; 6) названия, выраженные числовыми показателями; 7) образно-метафорические названия. Гидронимы, возникшие в результате практической деятельности человека, подразделяются на следующие подгруппы: 1) гидронимы, связанные с бытом и хозяйственной жизнью населения; 2) гидронимы, значения которых связаны с общественной жизнью и духовной культурой населения; 3) гидронимы, образованные от антропонимов; 4) гидронимы, образованные от этнонимов; 5) гидронимы, образованные от топонимов.
*В заключении* автор приходит к выводу, что в результате лексико-семантического анализа можно установить принципы номинации гидронимов, выявить физико-географические характеристики местности, получить новые сведения о материальной и духовной культуре чувашского народа.

***Ключевые слова:*** чувашские гидронимы, чувашские ойконимы, названия водных объектов, лексико-семантический анализ, лексико-семантические группы, физико-географические свойства, материальная и духовная культура чувашского народа.

***Для цитирования:*** Егорова А.С. Лексико-семантические группы чувашских гидронимов // Развитие образования. – 2021. – Т. 4, №1. – С. 29-34. DOI 10.31483/r-98039.


CC BY

# Lexico-Semantic Groups of Chuvash Hydronyms

**Anna S. Egorova**
BI of FVE "Chuvash Republican Institute of Education" of the Ministry of Education of Chuvashia, Cheboksary, Russian Federation.
ORCID: https://orcid.org/0000-0002-3603-171X, e-mail: annaerenar@mail.ru

***Resume:*** The article is devoted to the lexical and semantic analysis of Chuvash hydronyms.

*The purpose* of the study is to classify the names of water bodies by lexical and semantic groups, to identify the main principles of the nomination of hydro-names. The article deals with the names of rivers and streams, lakes and ponds, swamps and swampy places, the names of springs and wells. The main material for the analysis was collected by the author during field research, data from the toponymic file of the Scientific Archive of the CSUH and various cartographic sources, maps of land stored in rural administrations of the Chuvash Republic were used.

*The main methods* are descriptive, comparative, typological, and statistical ones.

*The results of the study* showed that according to the lexical and semantic classification, Chuvash hydronyms are divided into two groups: 1) hydronyms that reflect the physical and geographical properties of water bodies and their environment; 2) hydronyms that have arisen as a result of practical human activity. Most of the names of water bodies are based on a specific feature of the geographical realities themselves. Their Chuvash language can be grouped into the following subgroups: 1) names containing a significant feature of the object; 2) names indicating the ground, soil; 3) names related to the plant world; 4) names associated with the animal world; 5) names indicating the location of the water body; 6) names expressed by numerical indicators; 7) figurative and metaphorical names. Hydronyms that have arisen as a result of the practical activity of a person are divided into the following subgroups: 1) hydronyms related to the life and economic life of the population; 2) hydronyms whose meanings are related to the social life and spiritual culture of the population; 3) hydronyms derived from anthroponyms; 4) hydronyms derived from ethnonyms; 5) hydronyms derived from toponyms.

*It is concluded that* as a result of lexical and semantic analysis, it is possible to establish the principles of the nomination of hydronymes, to identify the physical and geographical characteristics of the area, to obtain new information about the material and spiritual culture of the Chuvash people.

***Keywords:*** Chuvash hydronyms, Chuvash oikonyms, names of water bodies, lexico-semantic analysis, lexico-semantic groups, physical and geographical properties,material and spiritual culture of the Chuvash people.

***For citation:*** Egorova A.S. (2021). Lexico-Semantic Groups of Chuvash Hydronyms. *Razvitie obrazovaniya = Development of education, 4*(11), 29-34. (In Chuv.) DOI:10.31483/r-98039.

**Кӳртӗм**

Шыв-шур ячӗсем – сӗм авалхи сӑмахсем, чылай чухне вӗсем ҫав ятлӑ хуласемпе ялсен ячӗсенчен те аслӑрах. Тӗрлӗ вӑхӑтра тата тӗрлӗ чӗлхе материалӗнчен йӗркеленнӗ пирки гидронимсен пӗлтерӗшне уҫса парас тесен чӗлхе тата халӑх историне аван пӗлмелле, вырӑнти географи уйрӑмлӑхӗсене шута илмелле. Шыв-шур ячӗсене пӗлтерӗш енчен тишкернине юлашки вӑхӑтра А.С. Егорова [4; 5], Ю.Н. Исаев [7; 8] ӗҫӗсенче асӑрхама пулать.

Хамӑр ӗҫре эпир чӑваш чӗлхинче шыв-шура ят панин уйрӑмлӑхӗсене тӗпчес, гидронимсен пӗлтерӗш ушкӑнӗсене тупса палӑртас тӗллев лартрӑмӑр. Тӗллеве пурнӑҫлас тесе хамӑр картотекӑри 4 пине яхӑн гидронима тишкертӗмӗр, ҫапах та ушкӑнсене пайланӑ чух пӗлтерӗшӗ уҫӑмлӑ, хальхи чӗлхе материалӗпе тӳрех ӑнлантарма пулакан ятсене ҫеҫ илтӗмӗр. Хамӑр тӗпчеве ытларах сӑнлав, танлаштару-шайлаштару, типологи, статистика мелӗсем ҫине таянса йӗркелерӗмӗр.

Шыв-шур ячӗсем ӑнсӑртран ҫуралман. Шыв-шура ят паракан ҫынсем чи малтанах географи объекчӗсен тӳрех куҫа курӑнакан паллӑрах енӗсене шута илнӗ. Гидронимсенче шыв тӗсӗ, температури, тути, ҫӗр пичӗн расналӑхӗ, ӳсен-тӑран тата чӗр чун тӗнчи т. ыт. те сӑнланнӑ. Ҫынсем ҫав паллӑсенчен пӗрне уйӑрса илнӗ те, вӑл вара ятра ҫирӗпленсе юлнӑ.

**Тӗпчев результачӗ**

Ҫавӑн пекех шыв-шур ячӗсенче халӑхӑн кун-ҫулӗ, йӑли-йӗрки, ӗҫӗ-хӗлӗ палӑрать. Ҫапла майпа гидронимсене пӗлтерӗш енчен икӗ пысӑк ушкӑна уйӑрма пулать:

1) ҫут ҫанталӑк уйрӑмлӑхӗсене кӑтартаканнисем;
2) ҫынпа е унӑн ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫыхӑннисем [5, с. 59].

Ҫут ҫанталӑк уйрӑмлӑхӗсене кӑтартакан гидронимсем чи авалхисем шутланаҫҫӗ. Вӗсене хӑйсене ҫак ушкӑнсене пайлама пулать:

1) объект уйрӑмлӑхне кӑтартакан гидронимсем;
2) ҫӗр пичӗн расналӑхне кӑтартакан гидронимсем;
3) ӳсен-тӑран тӗнчин хӑй евӗрлӗхне палӑртакан гидронимсем;
4) чӗр чун тӗнчин хӑй евӗрлӗхне палӑртакан гидронимсем;
5) географи объекчӗсен вырӑнне кӑтартакан гидронимсем;
6) объект шутне кӑтартакан гидронимсем;
7) сӑнарлӑ гидронимсем [2, с. 185–186].

Объект уйрӑмлӑхне кӑтартакан гидронимсем хӑйсем ҫакӑн пек ушкӑнсене пайланаҫҫӗ:

1) объект тӑршшӗне, калӑпӑшне, тарӑнӑшне кӑтартаканнисем: *Вӑрӑм ҫӑл, Аслӑ шур, Мӑн кӳлӗ, Мӑн ҫӑл, Пӗчӗк кӳлӗ, Пысӑк шур, Пысӑк лачака, Ӑшӑх пӗве, Тарӑн шыв, Тӗпсӗр кӳлӗ* т. ыт. те;

2) объект кӳлепине кӑтартаканнисем: *Кукӑр кӳлӗ, Ҫавра кӳлӗ, Шӗвӗр кӳлӗ, Коккӑр пӗве, Тӳрӗ ҫырма, Юплӗ кӳлӗ* т. ыт. те;

3) шыв пахалӑхне (температурине, тутине, шӑршине, тӑрӑлӑхне) кӑтартаканнисем: *Сивӗ ҫӑлкуҫ, Сивӗ ҫӑл, Сив шыв пӗви, Сишу (Сив шу), Тӑварлӑ ҫӑл, Тутлӑ шыв, Шӑршлӑ шыв, Таса кӳлӗ, Тӑрӑ ҫӑл, Тӑрӑ кӳлӗ* т. ыт. те;

4) тӗсе пӗлтерекен паллӑ ячӗсенчен пулнӑ гидронимсем: *Хура ҫырма, Хура кӳл, Хура ҫӑл, Шур пӗве, Шор шу, Шур ҫӑл, Сар Хурӑн, Сар хорнай, Хӗрлӗ кӳлӗ, Хӗрлӗ ҫыр, Хӗрлӗ шор, Хӗрлӗ ҫырма, Хӗрлӗ пылчӑк, Кӑвак Атӑл, Симӗс кӳлӗ* т. ыт. те.

Тӗсе палӑртакан сӑмахсенчен пулнӑ гидронимсем ытти чӗлхесенче те тӗл пулаҫҫӗ. Тутар тӗпчевҫи Ф.Г. Гарипова


CC BY

кун йышши ятсене тĕпченĕ чухне çĕр пичĕн уйрăмлăхĕсене шута илмелле тесе палăртать [1, с. 142]. О.Т. Молчанова çырнă тăрăх, тĕрĕк топонимĕсенчен 14 проценчĕ тĕсе пĕлтерекен сăмахсенчен пулса кайнă [9, с. 192].

Чăваш гидронимĕсенчи *хĕрлĕ сăмах* ытларах чухне «хĕрлĕ тăмлă» тенине пĕлтерет (*Хĕрлĕ çыр, Хĕрлĕ авăр, Хĕрлĕ шур* т. ыт. те). Хăш-пĕр чухне, сăмахран, Вăрнар районĕн Пăртас ялĕнчи Хĕрлĕ çырма гидроним тутăх тĕслĕ шыва палăртать.

Органикăллă япаласем нумай пулнăран вăрманти кӳлĕсем е вăрмантан юхса тухакан шывсем чылай чухне хура тĕслĕ курăнаççĕ, çавăнпа та вĕсен ячĕсем час-часах *хура* сăмахпа çӳреççĕ (*Хора кӳлĕ, Хура шыв, Хура çăл* т. ыт. те). Гидронимсенче хура сăмах курăс хутнипе, кайăк-кĕшĕк вараланипе е ытти сăлтавпа тасамарланнă шыва та палăртма пултарать (*Хура кӳлĕ, Хура çыр* т. ыт. те). Нумай çăл кусçлă, питĕ таран та тăп-тăрă шыв-шур объекчĕсен ячĕсенче те хура сăмах тĕл пулма пултарать (*Хура шыв, Хура çăл* т. ыт. те). Тăвай районĕн Тăрмăш ялĕнчи *Хура çăл хĕлле* те шăнман 5–6 çăл кусçран тăрать, вĕсенчи шыв аякран хура курăнать пулин те питĕ тăрă.

Пирĕн картотекăра «*сарă (сар)* + географи терминĕ» модельпе пулнă пĕр гидроним та çук. Эпир тупса палăртнă гидронимсенче *сарă* сăмах е *тăван* (*Сартăван, Сартăван лачаки* т. ыт. те) е *хурăн* сăмахпа (*Сар хурăн варĕ, Сар хорн (хурăн) ай кӳлли, Сар хорн (хурăн) шывĕ, Сар хурăн çăлкусĕ* т. ыт. те) çыхăннă. Ку ятсем географи объекчĕсене палăртнисĕр пусне киреметсене те пĕлтереççĕ: *Сархорăн киремечĕ, Сар хурăн кĕлли, Сартăван.* Н.И. Золотницкий çырнă тăрăх, çакăн пек топонимсенче сар «пысăк, çӳллĕ» е «тĕп» пĕлтерĕшлĕ [6, с. 260]. Пирĕн шутпа та, *Сартăван, Сархурăн* йышши ятсенче *сар* сăмах тĕсе пĕлтермест, перс чĕлхинчи «аслă, тĕп» пĕлтерĕшлĕ сăмахпа пĕр тымарлă. Киремет ячĕсемпе тĕрлĕ титула пĕлтерекен сăмахсенчен пулса кайнă топонимсенче *аслă* тата *кĕçĕн* сăмахсем час-часах тĕл пулни те (*Аслă киремет, Кĕçĕн киремет, Аслă Тархан, Кĕçĕн Тархан* т. ыт. те), *сар* сăмах географи терминĕ çумне тӳрех хушăнса пулнă гидронимсем çукки те пирĕн шухăша ĕнентерме пулăшать. А. Никифоров шухăшĕпе те, чăваш топонимĕсенче *сарă* сăмах «таса, сăваплă» тенине пĕлтерет [10, с. 3], анчах та эпир унăн пур тĕслĕхĕпе те килĕшме пултараймастпăр. Сăмахран, *Юмансар* юхан шыв ячĕ «сăваплă юман» пĕлтерĕшлĕ мар, ку гидроним, пирĕн шутпа, юман йывăç ячĕ çумне -сар аффикс хушăннипе пулнă. *Сар караç кӳлли, Саррисен кӳлли (Сарри хушма ят)* гидронимсене этимологийĕ уçăмлă пулнăран ку ушкăнта тишкерместпĕр. Çапла вара, пирĕн картотекăри гидронимсенчен пĕри те сар сăмахпа тӳррĕн çыхăнман.

*Шур* сăмахлă гидронимсем чылай чухне тĕпĕнче е çыранĕсенче акшар е шурă чул пур шывсене палăртаççĕ: *Шур пĕве, Шур çăл, Шор çăл* т. ыт. те. *Шор тăм вар шывĕ* гидроним çĕр уйрăмлăхне кăтартать. *Шур(ă)* паллă ячĕ *шур* «шурлăх» сăмахпа омонимлă пулни те гидронимсен пĕлтерĕшне тĕрĕс палăртма чăрмантарать: *Шор çăл куç* «çутă çăл куç» пĕлтерĕшлĕ те, «шур çăл кусĕ» (3-мĕш сăпат аффиксĕ тухса ӳкме пултарать) пĕлтерĕшлĕ те пулма пултарать.

*Симĕс* сăмахпа эпир пĕр гидроним анчах (*Симĕс кӳлĕ*) тупрăмăр. Кӳлĕ-пĕве шыв ӳсен-тăранĕпе хупланса ларсан чăвашсем *пĕвери (кӳлĕри) шыв симĕсленнĕ теççĕ*. *Симĕс* сăмахпа гидронимсем çуккине, пирĕн шутпа, шыв симĕсленни яланхи паллă пулманнипе (çулталăкăн пĕр вăхăтĕнче кăна пулнипе) ăнлантарма пулать.

*Кăвак* сăмахпа пулнă *Кăвак Атăл* гидроним юрăра кăна тĕл пулать.

Çапла вара, тĕсе пĕлтерекен сăмахсенчен пулнă гидронимсенче хура сăмах чи нумай тĕл пулать, ун хыççăн хĕрлĕ, шурă сăмахсем пыраççĕ.

*Тăм кӳлли, Тăм шывĕ, Тăм пĕви, Тăмлă кӳлĕ, Тăмлă çырма, Торф кӳлли, Торф пĕви, Торф лакăмĕ, Хăйăр кӳлли, Хăйăрлă шыв, Хăйăрлă шыв, Хăйăрлă çырма, Чул çырма, Чол авăр, Чул çăл, Шор тăм вар шывĕ, Шыв кăпăк çырми* йышши ятсем çĕр пичĕн уйрăмлăхне сăнарлаççĕ.

Шв-шур ячĕсем ӳсен-тăран тĕнчин хăй евĕрлĕхне те кăтартаççĕ. Чăваш чĕлхинче йывăç (*Ăвăслăх кӳлли, Йăмраллă вар, Хурăн кӳлли, Хурама кӳлли, Çирĕклĕх, Çӳçеллĕ вар, Чăрăш пĕви, Юман кӳлли* т. ыт. те), шывлă çĕрте ӳсекен ӳсен-тăран (*Хăмăшлă вар, Мăклă кӳлĕ, Мăк шур, Хăяхлă вар, Хăях улăхĕ, Чаканлă* т. ыт. те), курăк (*Хупах çырми, Шрут çырми* т. ыт. те) ячĕсенчен пулнă гидронимсем анлă сарăлнă.

Шыв-шура ят панă чух çынсем çав тăрăхра пурăнакан чĕр чунсене те шута илнĕ. Чăваш чĕлхинче пулă тата шыври ытти чĕр чунсен ячĕсенчен пулнă гидронимсем чылай: *Карас кӳлли, Караç пĕви, Карп пĕви, Оланкă кӳлли, Рак кӳлли Сар караç кӳлли, Сăвăр кукăрĕ, Сĕлĕхлĕ кӳлĕ, Çăрттан аври, Çĕленлĕ кӳлĕ, Шапа кӳлли, Хурăн пуç пĕви* т. ыт. те. Кайăк ячĕсенчен ытларах кӳлĕ, шурлăх ячĕсем пулаççĕ: *Акăш кӳлли, Тăрна шурĕ, Тăрна çырми, Текерлĕк кӳлли, Хур кӳлли, Шор акăш кӳлли* т. ыт. те. Çав кӳлĕсенчен хăшĕ-пĕри типсе ларнă пулсан та вĕсен ячĕсем сыхланса юлнă. Килти выльăх-чĕрлĕх, тискер кайăк ячĕсенчен пулнă гидронимсем те тĕл пулаççĕ (*Ăйăр кӳлли, Вăкăр çăлĕ, Ĕне çырми, Качака çăлĕ, Кашкăр çырми, Кĕсре çырми, Сурăх касçи шывĕ, Сысна кӳлли* т. ыт. те), анчах чĕр чун ячĕ тĕл пулакан кашни гидронимах вăл е ку чĕр чун ячĕпе çыхăннă теме çук. Сăмахран, *Кашкăр çырми, Качака варĕ, Шăнкăрч пĕви, Пăрчăкан çăлĕ, Чĕкеç çырми* гидронимсем чĕр чунсемпе мар, йăх е çын ячĕсемпе çыхăнма пултарнă. Чĕр чун, уйрăмах кайăк, ячĕсем авалхи çын ячĕсем хушшинче чылай тĕл пулнине те палăртса хăвармалла. Çемьере ачасем вилсен анчах çуралнă пепкене кайăк е чĕр чун ятне парса вилĕмрен сыхласа хăварма пулать тесе шутланă авалхи чăвашсем. Çакăн пек йăла чăвашсен кăна мар, тĕнчери ытти халăхсен те пулнă. Хăш-пĕр чĕр чун ячĕсем малтан çын ятне е хушма ята куçнă, кайран вара вĕсем топонима хывăннă. Çавăнпа кашни гидронима уйрăм тишкерме тивет.

Гидронимсем шыв объекчĕсен вырăнне те кăтартма пултараççĕ. Чи малтанах ку ушкăна урăх географи объекчĕсемпе танлаштарса пулнă шыв-шур ячĕсем (*Çырма çăлĕ, Вăрман пĕви, Вăрман пĕви, Улăх кӳлли, Уйри пĕве, Сад кӳлли* т. ыт. те) кĕреççĕ. Объектăн пĕр-пĕр пайне кăтартакан гидронимсем *вăрă (вăрри), кукăр (кукри), пуç (пуçĕ), пыр (пырĕ), тăрă (тăрри), юпă (юппи)* сăмахсем хушăннипе пулса кайнă: *Ункă пуçĕ, Çавал ку-*


CC BY

*кри, Атăл пырĕ, Сĕве юппи* т. ыт. те. Пĕр пек географи объекчĕсем пĕр-пĕринпе танлаштарсан ăçтарах вырнаçнине кăтартакан гидронимсенче çўлти *(Çўлти çăл), анатри (Анатри çăл), малти (Малти пĕве), кайри (Кайри пĕве)* йышши сăмахсем тĕл пулаççĕ. Топонимсенче ку сăмахсем çавăн йышши тепĕр шыв объекчĕ юнашарах пулма пултарнине кăтартаççĕ: *Анатри пĕве* пулсан *Тури пĕве*, *Çўлти кўлĕ* пулсан *Аялти кўлĕ*, *Малти çăл* пулсан *Кайри çăл* е *Хыçалти çăл* пулатех. Вĕсем хушшинче тепĕр объект пулсан ăна палăртма варринчи сăмахпа усă кураççĕ: *Варринчи пĕве, Варринчи кўлĕ, Варринчи çăл*. *Варринчи* сăмах пур чухне те икĕ пĕр пек объект хушшинчи шыв-шура палăртмасан та пултарать, сăмахран, Элĕк районĕн Самушка ялĕнчи *Варринчи пĕве Карас пĕвипе Самушка пĕви* хушшинче вырнаçнă.

Шыв-шур ячĕсем хисепе палăртакан сăмахсем хушăннипе те йĕркеленеççĕ: *Пĕччен пĕве, Ик çăл, Йĕкĕр авăр, Йĕкĕр кўлĕ, Йĕкĕр çырма, Виç лупашка, Виç çăл, Пилĕк авăр, Çич кўл, Çич çăл, Çич çырма, Тăхăр çырма пуçĕнчи çăл куç, Вун икĕ çăл, Вун ик авăр, Вăтăр çăл, Çичĕ вон варĕнчи çăл куç, Виç çĕр пукан çăлĕ* т. ыт. те. Эпир пухнă тĕслĕхсенче *ик(ĕ), виç(ĕ), тăват(ă), пилĕк* хисеп ячĕсем чăн хисепе палăртаççĕ, *çич(ĕ), тăхăр, вун икĕ* хисеп ячĕсем – чăннине çывăх хисепе, *вăтăр, хĕрĕх, çич вон (çитмĕл), виç çĕр* хисеп ячĕсем – питĕ нумай хисепе. Хальтерех пулса кайнă гидронимсенче йĕрке хисеп ячĕсем йышлă (*Пĕрремĕш пĕве, Иккĕмĕш пĕве, Виççĕмĕш пĕве* т. ыт. те), вĕсем юнашар вырнаçнă объектсене уйăрма пулăшаççĕ. *Пĕччен* сăмахпа пулнă гидроним эпир пĕрре кăна тупса палăртрăмăр, ку сăмах ытларах микротопонимсенче тĕл пулать: *Пĕччен хыр, Пĕччен пўрт*.

Чăваш хăйĕн пуплевне яланах сăнарлă тума тăрăшать, тĕрлĕрен илемлĕх мелĕпе усă курать. Чăваш чĕлхинче *Ылтăн шу, Сутă кўлĕ, Суя çăл, Чун уççи çăлĕ, Январь çăлкуçĕ, Февраль çăлкуçĕ, Тĕпсĕр кўлĕ, Тунсăх, Тĕттĕм шор, Хăватлă çăл, Вĕри çăл, Васкашу* гидронимсем час-часах тĕл пулаççĕ. Д.В. Цыганкин палăртнă тăрăх, çакăн йышши топонимсенче çын тăван тавралăха мĕнлерех йышăнни палăрать, çапла майпа чĕрĕ мар япаласем чĕрĕ чунсен пахалăхĕсене йышăнаççĕ [11, с. 92].

Чăваш чĕлхинче шывăн кивĕ çулне палăртма *вил, вилнĕ* сăмахсемпе усă кураççĕ: *Вил Çавал, Вил Ункă, Вилнĕ Сĕнче*.

Çынпа е унăн ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă гидронимсене хăйсене 5 ушкăна уйăратпăр:

1) халăхăн пурлăх культурипе çыхăннă гидронимсем;

2) ăс-хакăл культурипе çыхăннă гидронимсем;

3) çын ячĕсенчен (антропонимсенчен) пулнă гидронимсем;

4) халăх ячĕсенчен (этнонимсенчен) пулнă гидронимсем;

5) топонимсенчен пулнă гидронимсем.

*Курăс кўлли, Сўс пĕви, Кантăр пĕви, Çип çырми, Утар çырми, Авăн çăлĕ, Тимĕрçĕ кўлли* йышши гидронимсем авалхи чăваш халăхĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ, хуçалăхĕ çинчен каласа кăтартаççĕ. Çавăн пекех шыв-шур ячĕсем чăвашсен авалхи тĕнче курăмĕ, тĕн ĕненĕвĕ, йăли-йĕрки çинчен пĕлме пулăшаççĕ: *Чўк çырми, Киремет кўлли, Киремет шурри, Киремет пусси, Йĕрĕх çăлĕ, Йĕрĕх çырми, Чўк çырми, Чўк çăлĕ, Çăмарта чўк çырми, Чўк кати çырми, Ӳчўк çырми, Уй чўк çăлĕ, Пумилкке çырми, Çимĕк кукри* т. ыт. те.

Чăваш гидронимĕсенче авалхи пуç пулса тăракан çынсене е должноçсене пĕлтерекен сăмахсем те упранса юлнă: *Кăлава çырми, Мăрса кўлли, Карач шурĕ, Улпут кўлли, Пуп çăлĕ, Пуп шурлăхĕ, Лашман çырми* т. ыт. те. Хальхи чăваш чĕлхинче хăш-пĕр сăмахĕсемпе (сăмахран, *мăрса* – тутар княçĕ, *карач* – хан советникĕ) усă курмаççĕ, вĕсем топонимсенче çеç сыхланса юлнă. *Султан пĕви* гидроним вара, пирĕн шутпа, хушма ятран пулса кайнă.

Чăваш ялĕн ячĕсем ытларах çын ячĕсенчен пулса кайнă пулсан антропонимсем юхан шыв ячĕсенче питĕ сахал тĕл пулаççĕ. Çын ячĕсенчен ытларах пĕчĕк çырма-çатра, кўлĕ-пĕве, çăл ячĕсем пулса кайнă. Вĕсем пĕве-çăл таврашне кам чавнине, вăл е ку объект камăн хуçалăхĕпе юнашар вырнаçнине, кампа мĕнле инкек пулса иртнине кăтартаççĕ. Вĕсем авалхи чăваш ячĕсенчен (*Пачкан пĕви, Тени кўлли, Ухварин вар*), вырăс чĕлхи урлĕ йышăннă ятсенчен (*Исай кăлати, Микулай çăлĕ, Максăм пĕви*), хушаматсенчен (*Леонтьев пĕви, Петрухинсен çăлĕ, Орлов пĕви*), хушма ятсенчен (*Сталин пĕви, Кăчăрма кўлли, Ляпак кўлли*), ятпа ашшĕ ячĕн пĕрлешĕвĕнчен (*Петĕр Васильч çалĕ, Валерий Палч кăлати)* йĕркеленнĕ [3, с. 81–85]. Антропонимсен хăш тĕсĕнчен пулнине кура гидронимсем хăш вăхăтра пулса кайнине те пĕлме пулать. Сăмахран, ятпа ашшĕ ячĕн пĕрлешĕвĕнчен пулнисем (*Валери Палч пĕви, Йăван Яккăлч пĕви*) иртнĕ ĕмĕрте сарăла пуçланă. Çынсене ашшĕ е амăшĕ ячĕпе чĕнни гидронимсенче паянхи кун та сыхланса юлнă: *Лиса Вени умĕнчи пусă, Кĕçтенкке Мишши çăлĕ, Паçа Кули умĕнчи пусă, Васса Мишши пĕви* т. ыт. те.

Арçын ячĕсенчен пулса кайнă гидронимсем хĕрарăм ячĕсенчен пулнисемпе танлаштарсан ытларах тĕл пулни ĕлĕк çĕр пайне арçынсене панипе тата пĕве-çăл чавасси арçын ĕçĕ пулнипе çыхăннă тесе шутлатпăр.

Антропонимсенчен пулса кайнă шыв-шур ячĕсем çавăн йышши ял ячĕсемпе танлаштарсан сахалтарах тĕл пулни, пирĕн шутпа, икĕ сăлтавпа çыхăннă:

1) шыв-шур ячĕсем ял ячĕсенчен маларах пулса кайнă;

2) юхан шывсем çын тунипе те пулса кайман, пĕр çыннăн та пулма пултараймаççĕ, çавăнпа вĕсене çын ячĕпе çыхăнтарма май çук.

Шыв-шур ячĕсем хушшинче халăх ячĕпе çыхăннисем те пур. Чылай чухне гидронимсем чăваш халăхĕпе çыхăнура пулнă халăхсемпе ăрусен ячĕсене кăтартаççĕ (*Мишер кўлли, Мăкшă шывĕ, Тутар çырми, Пăртас Çавалĕ, Çармăс кўлли*). Çакна та палăртмалла, вĕсем хушшинче ăнсăртран пулса кайнă ятсем пулма пултараççĕ. Сăмахран, информаторсем каланă тăрăх, кўлĕре вырăс путса вилнĕрен *Вырăс кўлли* гидроним пулса кайнă. Çĕрпў районĕн Патăрьел ялĕнчи *Вырăсла кўлĕ* ячĕ чăвашсене Христос тĕнне йышăнтарнипе çыхăннă. Хушăран шыв-шур ячĕсенче çыхăнура пулман халăх ячĕсем те тĕл пулкалаççĕ. Кун йышши гидронимсем чылай чухне хушма ятсенчен пулса кайма пултарнă. Сăмахран, *Француз çăлĕ* ятра этноним хушма ят урлă гидронима куçнă.

Шыв-шур ячĕсен тепĕр ушкăнĕ ял е ял таврашĕнчи вырăн ячĕпе çыхăнса пулнă. Вĕсем пурте иккĕмĕшле ятсем. Тĕпчев ĕçĕ кăтартнă тăрăх, çакăн йышши ятсем пĕвесене е çăл куçсене кăтартаççĕ: *Патреккел çăл куçĕ,*


CC BY

*Мăнал çырми, Мăк шур кӳлли, Куракăш пĕви, Уйпуç пĕви, Хăрах кас çырми* т. ыт. те.

**Пĕтĕмлетӳ**

Çапла вара, шыв-шур ячĕсене пĕлтерĕш енчен тишкернĕ хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳсем тума пулать:

1) юхан шыв ячĕсем питĕ авалхи сăмахсем пулнă пирки вĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен татăклă калама йывăр;

2) ытти шыв-шура ытларах çут çанталăк географи уйрăмлăхĕсене, вăл этем пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине кура ят панă;

3) гидронимсене тĕпчени халăх историне, йăли-йĕркине пĕлме пулăшать;

4) шыв-шур ячĕпе унăн пĕлтерĕшĕ чылай чухне тӳр килеççĕ, анчах та гидронимăн чăн-чăн пĕлтерĕшĕ яланах çиелте выртман пирки кашни ята уйрăм тишкерме тивет.

***Список литературы***


1. Гарипова Ф.Г. Татарская гидронимия: вопросы этногенеза татарского народа по данным гидронимии / Ф.Г.Гарипова. – Казань: ИЯЛИ, 1998. – 571 с.
2. Егорова А.С. Лексико-семантический анализ чувашских гидронимов / А.С. Егорова // Национальные языки и литературы в поликультурных условиях: сб. науч. статей. Вып. IV / отв. ред. А.Д. Ахвандерова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. гос. пед. ун-та, 2018. – С. 184–187.
3. Егорова А.С. Личные имена в чувашских гидронимах / А.С. Егорова // Ашмаринские чтения: сб. материалов IX Междунар. науч.-практ. конф. / сост. и отв. ред. А.М. Иванова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2014. – С. 81–85.
4. Егорова А.С. Чăваш гидронимĕсен пĕлтерĕш ушкăнĕсем / А.С. Егорова // Tehlikedeki Diller Dergisi. Journal of Endangered Languages. – Том 10. – Вып. 17. – С. 241–245.
5. Егорова А.С. Чувашская гидронимия / А.С. Егорова. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2010. – 198 с.
6. Золотницкий Н.И. Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен / Н.И. Золотницкий. – Казань: Типография Император. ун-та, 1875. – 279 с.
7. Исаев Ю.Н. Из истории села Норваш-Шигали Батыревского района Чувашской Республики / Ю.Н. Исаев // В.Л. Кузьмин и вопросы археографии, историографиии и истории Чувашиию: материалы региональной нучно-практической конференции / сост. и отв. ред. Ю.В. Гусаров. – Чебоксары, 2014. – С. 9–26.
8. Исаев Ю.Н. О происхождении названий некоторых мест юга Чувашии (на примере фольклорных и литературных источников) / Ю.Н. Исаев // Актуальные проблемы диалектологии языка народов России: материалы XV Всероссийской научной конференции, проводимой в рамках IV Всемирного курултая башкир и посвященной юбилею доктора филологических наук, профессора Ф.Г. Хисамитдиновой. – Уфа, 2015. – С. 106–110.
9. Молчанова О.Т. Желтые цвета в алтайском ономастиконе / О.Т. Молчанова // Тюркология. – Л., 1986. – С. 192–201.
10. Никифоров А. Тайна тюркских топонимов / А. Никифоров // Вучах. – 1993. –№1.
11. Цыганкин Д.В. Память земли / Д.В. Цыганкин. – Саранск: Мордов. кн. изд-во, 1993. – 160 с.


***References***


1. Garipova, F.G. (1998). Tatarskaia gidronimiia: voprosy etnogeneza tatarskogo naroda po dannym gidronimii., 571. Kazan': IIaLI.
2. Egorova, A.S. (2018). Leksiko-semanticheskii analiz chuvashskikh gidronimov. Natsional'nye iazyki i literatury v polikul'turnykh usloviiakh: sb. nauch. statei. Vyp. IV, 184-187. Cheboksary: Izd-vo Chuvash. gos. ped. un-ta.
3. Egorova, A.S. (2014). Lichnye imena v chuvashskikh gidronimakh. Ashmarinskie chteniia, 81-85. Cheboksary: Izd-vo Chuvash. un-ta.
4. Egorova, A.S. Chavash gidronimesen pelteresh ushkanesem. Tehlikedeki Diller Dergisi. Journal of Endangered Languages, Tom 10, 17, 241-245.
5. Egorova, A. S. (2010). Chuvashskaia gidronimiia., 198. Cheboksary: Izd-vo Chuvash. un-ta.
6. Zolotnitskii, N.I. (1875). Kornevoi chuvashsko-russkii slovar', sravnennyi s iazykami i narechiiami raznykh narodov tiurkskogo, finskogo i drugikh plemen., 279. Kazan': Tipografiia Imperator. un-ta.
7. Isaev, Iu.N. (2014). Iz istorii sela Norvash-Shigali Batyrevskogo raiona Chuvashskoi Respubliki. V.L. Kuz'min i voprosy arkheografii, istoriografiii i istorii Chuvashiiiu, 9-26. Cheboksary.
8. Isaev, Iu.N. (2015). O proiskhozhdenii nazvanii nekotorykh mest iuga Chuvashii (na primere fol'klornykh i literaturnykh istochnikov). Aktual'nye problemy dialektologii iazyka narodov Rossii: materialy XV Vserossiiskoi nauchnoi konferentsii, provodimoi v ramkakh IV Vsemirnogo kurultaia bashkir i posviashchennoi iubileiu doktora filologicheskikh nauk, professora F.G. Khisamitdinovoi, 106-110. Ufa.
9. Molchanova, O.T. (1986). Zheltye tsveta v altaiskom onomastikone. Tiurkologiia, 192-201. L.
10. Nikiforov, A. (1993). Taina tiurkskikh toponimov. Vuchakh.
11. Tsygankin, D.V. (1993). Pamiat' zemli., 160. Saransk: Mordov. kn. izd-vo.



CC BY

***Автор ҫинчен пĕлтерни***

**Егорова Анна Семеновна –** филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, доцент, Чăваш Енĕн Вĕренӳ министерствин ЧР ХПВ «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» БУ, Шупашкар хули, Раҫҫей Федерацийĕ.

***Информация об авторе***

**Егорова Анна Семеновна –** канд. филол. наук, доцент, БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования» Минобразования Чувашии, Чебоксары, Российская Федерация.

***Information about the author***

**Anna S. Egorova –** candidate of philological sciences, associate professor of BI of FVE “Chuvash Republican Institute of Education” of the Ministry of Education of Chuvashia, Cheboksary, Russian Federation.



**Поступила в редакцию / Received / Редакцие ҫитнĕ** 17.02.2021
**Принята к публикации / Accepted / Пичетлеме йышăннă** 16.03.2021
**Опубликована / Published / Пичетленсе тухнă** 17.03.2021



CC BY